26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 АПРЕЛЬ 2 ЭРНЕКУН 71(6308) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чугунсул транспорчĕн уйрăмах палăрнă работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăласси çинчен

Чугунçул транспорчĕ çинче вăя шеллемесĕр ĕçленĕшĕн, ĕçре лунина методсемпе ăнăçлăн усă курнăшăн, çулăмĕçсемпе стрелкăсен хуçалăхне лайăх тытса усранăшăн тата производство кăтартăвĕсене ӳстерсе тултарнăшăн чугунçул транспорчĕнчи уйрăмах палăрнă çак работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăлас:

1. Иван Федорович **Акимова** — Улатăр станцинчи 14-мĕш дистанцинчи пролазчика.
2. Ясон Александрович **Александрова** — Канаш станцинчи вагонсене техника енĕпе пăхакан пункри слесаре.
3. Клавдия Артемьевна **Ардеевăна** — Йĕпреç станцинчи паровоссен çине вутă парас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадира.
4. Михаил Алексеевич **Арзамасова** — сигнализаципе çыхăнăвăн 4-мĕш дистанцинчи электротехника.
5. Александр Федотович **Бакланова** — паровоз хуçалăхĕн 3-мĕш отделенинчи шыв хуçалăхĕнчи токаре.
6. Терентий Миронович **Балабанова** — сигнализаципе çыхăнăвăн 4-мĕш дистанцинчи электрика.
7. Геннадий Васильевич **Белоусова** — Канаш станцинчи вагонсене техника енĕпе пăхакан пункри мастера.
8. Евгения Евдокимовна **Бурмистровăна** — Йĕпреç станцинчи водокачка машинистне.
9. Анастасия Николаевна **Бутузовăна** — 252-мĕш разъездри старши стрелочника.
10. Иван Егорович **Воронина** — Улатăр станцинчи депо машинисчĕн помощникне.
11. Иван Сергеевич **Воробьева** — Вăрмар станцинчи товарнăй кассира.
12. Иван Михайлович **Волкова** — чугунçул службин 14-мĕш дистанцинчи 3-мĕш участокри бригадира.
13. Кирилл Герасимович **Герасимова** — Канаш станцинчи топливо складĕнчи рабочие.
14. Константин Васильевич **Головлева** — Канаш станцинчи депо машинисчĕн помощникне.
15. Николай Николаевич **Горячева** — чугунçул службин 14-мĕш дистанцинчи тимĕрçе.
16. Федор Лукич **Гупалова** — Канаш станцинчи депо машинисчĕн помощникне.
17. Алексей Романович **Данькова** — Улатăр кондукторсен резервĕн главнăй кондукторне.
18. Михаил Дмитриевич **Дмитриева** — чугунçул службин 5-мĕш дистанцинчи 3-мĕш околодокăн çулйĕр мастерне.
19. Василий Яковлевич **Дорохова** — Улатăр станцинчи депо машинисчĕне.
20. Михаил Николаевич **Евграфова** — Канаш станцинчи çулйĕр строительстви участокĕн бригадир-столярне.
21. Игнатий Емельянович **Емельянова** — Канаш станцинчи грузчике.
22. Константин Семенович **Елушева** — Улатăр станцинчи депори хуран мастерне.
23. Митрофан Евдокимович **Евдокимова** — Шупашкар станцинчи слесарь-механика.
24. Мария Егоровна **Егоровăна** — Шупашкар станцинчи стрелочника.
25. Никита Иванович **Еремина** — Улатăрти кондукторсен резервĕн кондукторне.
26. Сергей Михайлович **Жигунова** — Канаш станцинчи депори электросварщика.
27. Иван Васильевич **Золотухина** — Канаш станцинчи депори слесаре.
28. Петр Яковлевич **Ивлева** — Улатăр станцинчи кĕçĕн стрелочника.
29. Василий Афанасьевич **Кузина** — Улатăр станцинчи депори слесаре.
30. Павел Кириллович **Кириллова** — Вăрмар станцинчи стрелочника.
31. Харлампий Архипович **Кочмарева** — Канаш станцинчи депо машинисчĕне.
32. Мария Степановна **Куприяновăна** — Канаш станцинчи старши стрелочника.
33. Григорий Алексеевич **Лабая** — Шупашкар станцинчи поездсене пуххса йĕркелекене.
34. Иван Леонтьевич **Леонтьева** — Канаш станцинчи топливо складĕнчи дежурнăя.
35. Алексей Максимович **Максимова** — Вăрмар станцинчи стрелочника.
36. Валерий Кузьмич **Малова** — Шупашкар станцинчи дежурнăя.
37. Петр Федорович **Максимова** — вагонсене техника енĕпе пăхакан Улатăри пунктăн мастерне.
38. Борис Иванович **Митричева** — чугунçул службин 14-мĕш дистанцинчи 2-мĕш рабочи участокĕн бригадирне.
39. Гурий Николаевич **Мишакова** — чугунçул службин 5-мĕш дистанцинчи ремонт тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен старши рабочие.
40. Филипп Алексеевич **Морозова** — Вăрмар станцинчи дежурнăя.
41. Иван Михайлович **Николаева** — Улатăр станцинчи депо машинисчĕне.
42. Николай Никонорович **Никонорова** — чугунçул службин 4-мĕш дистанцинчи 7-мĕш околодокри обходчика.
43. Арсений Николаевич **Николаева** — чугунçул службин 5-мĕш дистанцинчи 3-мĕш околодокри бригадира.
44. Леонид Григорьевич **Николаева** — Канаш станцинчи депо машинисчĕне.
45. Иосиф Егорович **Петрова** — Канаш станцинчи юсав поезчĕн трактористне.
46. Василий Петрович **Петрова** — Канаш станцинчи вагонсене пăхса тăракана.
47. Федор Иванович **Подгорнова** — Шупашкар станцин начальникне.
48. Михаил Петрович **Попова** — Вăрмар станцинчи старши стрелочника.
49. Гаврил Павлович **Павлова** — Канаш станцинчи депори кочегара.
50. Сергей Петрович **Петрова** — Канашри кондукторсен резервĕн старши кондукторне.
51. Дмитрий Ефимович **Рузавина** — Улатăр станцинчи грузчиксен прорабне.
52. Михаил Иванович **Семашкина** — чугунçул службин 5-мĕш дистанцинчи тимĕрçе.
53. Николай Алексеевич **Соловьева** — Канаш станцинчи депо машинисчĕне.
54. Иван Семенович **Сорокина** — сигнализаципе çыхăнăвăн 3-мĕш дистанцинчи телеграфиста.
55. Анна Степановна **Степановăна** — Вăрмар станцинчи стрелочника.
56. Константин Павлович **Тихонова** — вагонсене техника енĕпе пăхакан Улатăрти пунктăн мастерне.
57. Данил Трофимович **Трофимова** — Канаш станцинчи кĕçĕн стрелочника.
58. Николай Иванович **Федорова** — Улатăр станцинчи депори слесаре.
59. Елизавета Федоровна **Федоровăна** — чугунçул службин 5-мĕш дистанцинчи Енĕшпуç разъездĕнчи обходчика.
60. Василий Федотович **Федотова** — Канаш станцинчи грузчика.
61. Федор Яковлевич **Фролова** — Алатырь станцин начальникне.
62. Борис Алексеевич **Шиблева** — Улатăр станцинчи старши стрелочника.

Чăваш АССР, Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **З. АНДРЕЕВА.**

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи мартăн 29-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 30-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 30-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Хура тинĕсре пирĕн карапсем тăшманăн 2.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Мартăн 29-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чăсĕсем нимĕçсен 10 танкне çити тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 7 батарейине пусарнă. Баренц тинĕсĕнче пирĕн авиаци тăшманăн пĕтĕмпе 6.000 тонна водоизмещениллĕ 3 транспортне путарнă.

* * *

Çурçĕр Донецăн вăтам районĕнчи пĕр участокра кун каçичченех тăшманпа хаяррăн çапăçнă. Танковăй дивизи вăйĕпе пирĕн оборона линине татса кĕрес шутпа тăшман наступлени пуçарса янă. Хăйĕн дивизине тăшман артиллерирен вăйлăн персе тăнипе тата авиацин пысăк вăйĕсемпе пулăшса тăнă. Генерал-майор Тихонов командир пулса ертсе пыракан пирĕн гвардеецсен соединенийĕ тăшман тапăннине çирĕппĕн кĕтсе илсе, гитлеровецсен атакисене пурне те сирсе пăрахнă. Çапăçу вăхăтĕнче пирĕн боецсем хăйсем темиçе хут та контратака туса тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен хăй тĕллĕн куçса çӳрекен 10 орудине пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 22 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 500 çити вилли выртса юлнă. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем, зенитнăй артиллери тата пăшалсемпе пулеметсенчен персе тăнипе тăшманăн 18 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем çак уйрăм участоксенче активлăн çапăçнă. Пĕр чăçĕн боецĕсем нимĕçсене çапса хăваланă пĕр пунктран хĕссе кăларнă. Çавăнта пулнă çапăçусенче 200 гитлеровецă ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пĕр соединенин чăçĕсем нимĕçсен оборонине штурмпа тăрса кĕнĕ те вăйлă тĕреклетнĕ халăх пурăнакан пункта йышăннă. Трофейсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн войскăсем тăшман оборонине разведка тунă, уйрăм участоксенче вырăнти çапăçусем туса пынă. Тĕтре хупласа тăнипе усă курса, совет боецĕсем вăрттăн тăшманăн пĕр опорнăй пункчĕ патне пырса çитнĕ те унта пулнă гитлеровецсене атакăланă. Çапăçу хирĕнче хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 100 ытла виллине пăрахса хăварса, нимĕçсем çав пунктран каялла чакнă.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ мартăн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле халăх пурăнакан икĕ пунктри нимĕç гарнизонĕсене аркатса тăкнă. Партизансем темиçе вуншар гитлеровеца вĕлернĕ, тата 66 çынна тыткăна илнĕ. Миномет, 3 пулемет, 87 винтовка, минăсем тата патронсем нумай тытса илнĕ. Партизансен тепĕр отрячĕ тăшманăн поездне ӳпĕнтерсе янă. Партизансем хастарлăн кĕрешнине пула Орел облаçĕ урлă каçакан чи паха чугунçул сахалтан та икĕ эрнелĕхе стройран тухнă.

* * *

Вĕлернĕ нимĕç салтакĕ çумĕнче Марктредвицран аппăшĕ çырнă çыру тупнă. Çырура çапла каланă: ...«Российăра пиртĕ йывăрри çинчен Франц çырнă пулин те, унпа çавăн пек инкек пуласси эпĕ тĕлĕкре те курман. Ман пата йĕнер Франц юлташĕ килсе пурин çинчен те тĕплĕн каласа пачĕ. 180 çын шутланнă ротăра мĕн пурĕ те 12 çын кăна тăрса юлнă. Унтер-офицерсенчен пĕр Франц çеç сăлăнса юлнă. Ирхине 5 сехетре вĕсем вара каялла чакма пуçланă, тепĕр сехетрен Франц вилнĕ те... Марктредвицран кайнă çынсем нумайĕшĕ вилнĕ ĕнтĕ. Хăшпĕр çемьесенче икшер ывăл пĕтнĕ. Малалла мĕн пулĕ-ха капла?»

* * *

Смоленск облаçĕнчи Сычевка хули çыннисем Мария Калинина, Наталья Удовенко тата Евдокия Орлова çапла каласа панă: «Нимĕçсен фашистла ирçĕрĕсем Юшино ялĕнче мирлĕ халăх валли концетрациллĕ лагерь туса хунă. Çав лагере гитлеровецсем Сычевка хулинчи тата таврари ялсенчи мирлĕ граждансене нумайĕшне илсе пырса хупнă. Хупнисем хушшинче çамрăк ачасем тата пĕчĕк ачаллă хĕрарăмсем нумай пулнă. Хупса лартнисене çав тери тискеррĕн асаплантарнă. Лагерьте асаплантармалли камера пулнă, унта кĕрсен каялла сахал çын тухма пултарнă. Кунта нимĕç бандичĕсем хăйсен жертвисене асаплантарнă. Çынсене персе пăрахман кун пит сахал пулнă. Январĕн 15-мĕшĕнче кăна 36 çынна персе пăрахнă. Тепрехинче эпир ларнă икĕ камерта пĕр кун хушшинче 28 хĕрарăма персе пăрахрĕç. Пĕр уйăх хушшинче фашистсем 200 çынна ытла вĕлерчĕç, çав çынсем хушшинче ачасем нумай пулнă».

Мартăн 31-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 31-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Кубанĕн анатри пайĕнче нимĕç оборонин чи кирлĕ узелне — Анастасиевская ятлă пункта йышăнса илнĕ.

Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Мартăн 30-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 5 танкĕнчен каймар, тата войскăсемпе грузсем тиенĕ 50 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерипе минометсен 5 батарейине пусарнă, горючи складне çунтарса янă тата боеприпассен 2 складне сирпĕтсе янă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи уйрăм участоксенче пирĕн войскăсем вырăнти çапăçусем туса пынă. Пулса иртнĕ çумăрсем тата вăйлăн юр ирĕлсе пыни активлăн çапăçма чăрмантараççĕ. Пĕр участокра пирĕн подразделенисем тăшманăн боевой хуралне аркатса тăкса малалла куçнă. Нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 8 пулемет, винтовкăсем тата патронсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр соединенин чаçĕсем виçĕ кун хушши пулнă çапăçусенче нимĕç пехотин пĕр батальонне ытла пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 6 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 4 орудине персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Çурçĕр Донецăн вăтам районĕнче пирĕн подразделенисем нимĕç пехотин пĕр батальонĕ тунă атакăна, танксемпе артиллери пулăшса пынипе тунăскере, сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 150 виллине тата çунтарса янă 2 танкне пăрахса хăварса, нимĕçсем малтанхи позицисем çине каялла чакнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре тăшман кĕпер хывса пĕр шыв урлă каçма хăтланнă. Артиллерипе минометсенчен персе, пирĕн подразделенисем гитлеровецсене сапаласа янă, гитлеровецсен вара васкаса каялла чакмалла пулнă.

* * *

Ильмен кӳллинчен кăнтăртарахра нимĕç пехоти пирĕн позицисене атакăланă. Пĕр чаçăн малта тăракан подразделенийĕсем гитлеровецсен атакине сирсе пăрахнă. Вилнисене кăна шутласан та тăшманăн 300-ре çити салтакпа офицерĕ пĕтнĕ.

* * *

Сумы облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ чугунçул станцине кĕрсе кайса 27 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем 2 паровоза сирпĕтсе янă, 2 пулемет, 22 винтовка тата патронсемпе гранатăсем нумай тытса илнĕ. Винница облаçĕнчи партизансен отрячĕ тăшман гарнизонĕсене темиçе хут пыра-пыра тапăнса нимĕçсен 78 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсем Германие каторгăна илсе кайма хăтланнă 60 совет гражданне партизансем ирĕке кăларнă. Çав отрядри партизансен пĕр ушкăнĕ тăшман поездне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 81-мĕш пехотнăй полкĕнчен хăй ирĕкĕпе тыткăна парăннă салтак Людвиг П. çапла каласа панă: «Пирĕн полк Ля Рошель хулинче (Франция) тăратчĕ, февралĕн 21-мĕшĕнче пире Россиăна илсе кайрĕç. Пирĕн шухăшкăмăлсем питĕ начарччĕ вара. Эпир Герингăн нумаях пулмасть каланă сăмахне асра тытаттăмăр: «Нимĕç салтакĕ ăçта вилни вăл пурпĕрех, салтак хăйĕн тивĕçне пурнăçлатăр кăна». Çак сăмах мана питĕ хумхантарса тарăхтарчĕ. Геринга эпĕ çапла ăнлантăм: Российăри нимĕç салтакĕсем, вĕсем кирек ăçта тăраççĕ пулсан та — Ленинград фронтĕнче-и, Ильмень кӳлли патĕнче-и, е кăнтăрта-и — вĕсене пурне те пĕтерсе тăкĕç. Çакăнтан ĕнтĕ эпĕ нимĕç çарĕ хăйне пĕтерсе лартмалли вăрçа малалла тăсса пырать тесе шутларăм. Çул çинче салтаксем пĕр-пĕрин хушшинче Германие Хĕвеланăç енчен хăрушă пулни çинчен пит нумай калаçатчĕç».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Житомир облаçĕнчи Рудня-Озерянская ялĕнче тискер ĕçсем туни çинчен пĕлтерӳ илнĕ. Гитлеровецсем вырăнти çынсенчен шкул çулне çитмен 25 ачана вăйпа туртса илнĕ те вĕсене çар госпитальне илсе кайнă. Госпитальре аманнă нимĕç офицерĕсем валли ачасен юнне илнĕ. Юн илнипе вăйсăрланса юлнă ачасем темиçе кунтан вилсе пĕтнĕ.

* * *

Бельгире паровозсем тăвакан пĕр заводри рабочисемпе нимĕç оккупанчĕсем хушшинче пĕр çула яхăн ĕнтĕ çапăçу пырать. Гитлеровецсем паровозсем тăвас ĕçе организацилеме хăтланнă пулнă, анчах рабочисем вĕсен ĕçĕсене чарса пынă. Патриотсем оборудованине аркатнă, технологи процесне пăсса пынă, чĕртавара сая янă т. ыт. те. Çулталăк хушшинче тем тери вирлĕ террор тунă пулин те, гитлеровецсем çав заводран пĕр паровоз та илме пултарайман. Льежра патриотсен пĕр ушкăнĕ нимĕçсен горючи складне кĕрсе кайнă та çĕрле резервуарсенчен пĕтĕм бензина юхтарса кăларнă. Намюр районĕнче Бельгири железнодорожниксем нимĕç поездне ӳпĕнтерсе янă.

А. С. Чемолосов профессора орден пани

Кăçалхи мартăн 29-мĕшĕнче СССР Верховный Совечĕн депутачĕ З. А. Андреева юлташ Алексей Степанович Чемолосов профессора Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне пачĕ. СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ ăна врач ĕçĕнче тата медицина наукинче нумай çулсем хушши тухăçлăн ĕçленĕшĕн тата трахомăна хирĕç кĕрешес ĕçри тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсемшĕн, çуралнăранпа 75 çул тултарнă майпа, наградăланă.

Наградăна илсе Алексей Степанович Чемолосов çапла каларĕ:

— Çакăн пек пысăк парнешĕн тав тума епĕ сăмах та тупаймастăп. Çак награда вăл — пирĕн пĕтĕм коллектива наградăлани пулать, çавăнпа та эпĕ хампа пĕрле ĕçлекен коллектив умĕнче парăмлă. Малашне хамăн мĕнпур вăя фронтшăн, пĕтĕм халăхшăн ĕçленĕ çĕре паратăп.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Андреева юлташ А. С. Чемолосов профессора награда илнĕ ятпа саламларĕ тата чăваш халăхĕн сывлăхне сыхлассишĕн малашне те нумай çулсем хушши тухăçлăн ĕçлеме ырă сывлăх сунчĕ.

Сталинла премии лауреачĕсен пултарулăхне кăтартни

Апрелĕн 1-мĕшĕнче Искусство работникĕсен тĕп çуртĕнче «1942 çулхи Сталинла премии лауреачĕсен пултарулăхне кăтартмалли эрне» пуçланать. Пирвайхи вечерта С. Прокофьев, М. Коваль, А. Хачатурян, В. Шебалин, Б. Асафьев, В. Соловьев-Седов, Н. Иванов-Радкевич композиторсен произведенийĕсене выляса е юрласа параççĕ.

Иккĕмĕш вечерта, апрелĕн 2-мĕшĕнче, вунă писателĕн, поэтăн, драматургăн произведенийĕсене вуласа е выляса кăтартаççĕ. Исполнительсем вырăнче авторсем хăйсем, Мускаври театрсен артисчĕсем, филармонипе радиокомитет артисчĕсем пулаççĕ. Апрелĕн 3-мĕшĕнче Мускава килнĕ Ногинскри драма театрĕн спектаклĕ пулать. Вăл пуçласа Л. Леоновăн «Нашествие» ятлă пьесине кăтартать. Унăн авторĕ Сталинла премии илме тивĕçлĕ пулнă.

Апрелĕн 7-мĕшĕнче Сталинла премии лауреачĕсен юлашки вечерĕ пулать. (ТАСС).

Совет физкультурникĕсен 1943 çулхи Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕсем

ЦК ВЛКСМ тата СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт Комитечĕ 1943 çулхи спорт ăмăртăвĕсен календарьне çирĕплетнĕ.

Кашни çулах миллионшар çынсем хутшăнакан, йăлана кĕнĕ массăллă физкультура мероприятийĕсем хушшинче çаксем пулмалла: çăмăл атлетика кросĕ, чăрмантару полоссинчен тухасси, штык вĕççĕн çапăçасси, ишесси тата шыв урлă каçасси.

Çĕршыври пысăк хуласенче çуллахи тата кĕркуннехи вăхăтра спортăн тĕп формисем тăрăх СССР-ти чи малта пыракансене палăртмалли ăмăртусем пулса иртмелле.

Пĕтĕм Союзри ăмăртусемсĕр пуçне пур хуласемпе районсенче те çулла тата кĕркунне физкультурниксен фабрикăсемпе заводсенчи тата колхозсенчи спартакиадисем тата студентсен ăмăртăвĕсем пулса иртмелле. Шкул ачисем, ФЗО шкулĕсенче, ремесленнăй тата чугунçул училищисенче вĕренекенсем тата всевобуч боецĕсем хушшинче спорт ĕçне уйрăмах вăйлатмаллине палăртса хунă. (ТАСС).

Совет кинопередвижкисем нимĕçсен тылĕнче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, мартăн 30-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Курса çӳрекен экран çине хумханса пăхаççĕ, унта «Секретарь райкома» ятлă фильм кăтартаççĕ. «Залри» обстановка картина çинчи пекех. Картинăна партизансен лагерĕн пĕр землянкинче кăтартаççĕ.

«Пысăк çĕртен» инçе пулсан та (Белорусси партизанĕсем совет çĕршывне çапла калаççĕ), вĕсем çĕршыв пурнăçĕнчен уйрăлман. Вĕсем радио итлеççĕ çеç мар, самолетсем илсе пыракан хаçатсемпе литературăна белорусс тата вырăс чĕлхипе вулаççĕ çеç мар, кинофильмсем те час-часах кураççĕ.

Механикпа унăн юлташĕ хăрушлăх çине пăхмасăр киноустановка илсе пыни вĕсемшĕн пысăк уяв пулса тăрать. Белоруссири партизансене тата оккупациленĕ ялсенчи халăха çак çулта çакăн пек картинăсем кăтартнă: «Чапаев», «Ленин в 1918 году», «Юность Максима», «Возвращение Максима», «Разгром немцев под Москвой», «Секретарь райкома» тата Союзкинохроникăн вунă киножурнал выпускне кăтартнă.

Кок-сагыз акма хатĕрленеççĕ

Красноармейски районри колхозсем кăçал 250 гектар çине кок-сагыз акаççĕ. Кок-сагыза çуракин малтанхи кунĕсенче акма кирлине шута илсе, çак ĕçе тума колхозниксем уйрăмах тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Паянхи куна кок-сагыз акма йышăннă колхозсем пурте вăрлăх хатĕрлесе хунă, акмалли çĕр лаптăкĕсене уйăрнă. Сăмахран «Сила», «Большевик», Молотов ячĕпе тăракан тата ытти нумай колхозсем коксагыз акма сеялкăсене майлаштарнă, плантацисене çемçетме удобренисем нумай хатĕрленĕ. Кок-сагыз енĕпе ĕçлеме кадрсем вĕрентсе хатĕрленĕ. Районĕпе илсен, кок-сагыз енĕпе ĕçлеме кăçал курсран 42 çынна вĕрентсе кăларнă.

Я. Ершов.

Библиотека лайăх ĕçлет

Канашри педучилище библиотеки хăй ĕçне аван туса пырать. Кунта библиотекарь пулса нумай çул хушши Щербакова юлташ ĕçлет. Библиотекăра 20 пин кĕнекерен ытла. Илемлĕ литература кĕнекисемсĕр пуçне вĕренме кирлĕ нагляднăй пособисем нумай. Щербакова кашни вĕренекен ачанах кĕнекесем илсе вулама хăнăхтарать. Разумов, Каргина, Григорьев, Петухов, Никифоров, Матвеев, Рахчеев, Миронов тата ытти вĕренекенсем уйрăмах нумай кĕнеке илсе вуланă. Библиотекăна хаçат-журналсем нумай килеççĕ. Шкулта витрина тунă. Унта кашни çĕнĕ хыпара тата çĕнĕ хаçатсене Щербакова вăхăтра çакса хурать. Щербакова юлташа темиçе хутчен те премиленĕ.

Художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленме тытăнчĕç

Канашри педучилище çумĕнчи П. Егоров ертсе пыракан хор кружокĕ мартăн 15-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 15-мĕшĕччен пыракан художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленме тытăнчĕ. Халĕ вĕсем халăхчен вĕреннĕ юрăсемпе частушкăсене тата çĕнĕ юрăсене вĕренме тытăнчĕç.

И. Максимов.

Колхозсем çуракине хатĕрленсе çитнине тĕрĕслетпĕр

ÇУРАКИНЕ ТĔПЛĔН ХАТĔРЛЕННĔ

ИШЛЕЙ, апрелĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Кибечкасси ялсоветĕнчи «Большевик» тата «Красный танк» колхозсем вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуракине тĕплĕн хатĕрленчĕç. Пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн вĕсем кăçал пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Апрелĕн 1-мĕшĕнче колхозсенче çуракине мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслерĕç. Тĕрĕслӳ ăмăртса ĕçлекен икĕ колхозĕ те çуракине большевикла хатĕрленнине кăтартса панă. «Большевик» колхоз (председателĕ Пайманов юлташ) çуракине паян тесен паянах тухма хатĕр. Агротехникăллă мероприятисене пурне те пурнăçланă, ялхуçалăх машинисем, транспорт инвентарĕ ĕçе тухма хатĕр.

«Красный танк» колхоз та (председателĕ Олангин юлташ) çуракине хатĕрленсе пысăк ĕçсем тунă. Уя 3.200 лав тислĕк кăларнă, 45 центнер кĕл, 25 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ. Ĕçе тухма 45 урапа, 50 сӳре, 50 плуг юсаса лартнă.

Колхозсем çураки ирттермелли ĕç планĕпе ĕç нормисене тунă. Вĕсене колхозниксен пухăвĕнче пăхса тухса çирĕплетнĕ, кашни бригадăн, колхозникĕн çураки вăхăтĕнчи обязанноçĕ паллă. Кибечкасси ялсоветĕнчи колхозсем кăçал çурхи тырăсене 5—7 талăк хушшинче акса хăварма палăртнă, пĕтĕм тырра яровизацилесе акаççĕ. «Красный танк» колхозра халь яровизаторсен курсĕ ĕçлет.

З. Митрофанова.

ТĔРĔСЛӲ ИКĔ ТĔРЛĔ РЕЗУЛЬТАТ КĂТАРТРĔ

КАЛИНИНО, апрелĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Шĕнерти «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз Чăрăш Шĕнерти «Красноармеец» колхозпа ăмăртса ĕçлет.

Апрелĕн 1-мĕшĕнче çав колхозсем хăйсем çуракине тухма епле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслесе тухрĕç. Тĕрĕслӳ икĕ тĕрлĕ результат кăтартрĕ: Шĕнерти «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз çуракине лайăх хатĕрленессишĕн большевикла кĕрешнĕ пулсан, «Красноармеец» колхозра çакăншăн кирлĕ пек кĕрешни пачах курăнмасть.

Шĕнерти «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз членĕсем (председателĕ коммунист В. Иванов) агротехникăллă мероприятисен планне пĕтĕмпех тата тĕплĕн пурнăçланă. Уйхире тăкма 2.370 тонна тислĕк, 7 тонна кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 11 тонна кĕл пухнă, минераллă удобренисене 5 тонна туртарса килнĕ. Вăрлăхсене вĕçĕ хутчен тасатса сортланă. Колхоз тимĕрçи Ф. Осипов 38 плуг, икĕ сеялка тата тимĕр сӳресене пурне те юсанă. Колхозри платниксем 86 урапа тĕрĕслесе юсаса лартнă, хăшпĕрисене çĕнĕрен тунă. 78 лаша ĕçе тухма хатĕр, вĕсене кӳлмелли ĕç хатĕрĕсем юсавлă тата çителĕклĕ.

Колхоз кăçал 3,5 гектар çине пахча-çимĕçсем лартать. Вăрлăхсем хатĕрлесе хунă. Ĕнер колхоз 36 гектар çине клевер акрĕ.

Чăваш Шĕнерти «Красноармеец» колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ăмăртăва тухнă пулин те, хăйĕн ĕçне кӳршĕсем пек туса пымасть. Колхозăн пур йышши вăрлăхĕсем те кондицие лармаççĕ. Пахча-çимĕç тата клевер вăрлăхĕ пачах çук. 27 гектар çинчи вăрлăхлăх клевера халĕ те çапман. Плугсем юр айĕнчех лараççĕ, лаша кӳлмелли хатĕрсем çитмеççĕ. «Красноармеец» колхозăн ĕçе васкатмалла, çуракине вăхăтра тата пур енлĕн хатĕрленсе тухмалла.

Г. Матвеев.

ФРОНТОВИКСЕН ÇЕМЬИСЕНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Шĕнерпуçĕнчи Маяковский ячĕпе тăракан колхоз фронтовиксен çемьисене пулăшма 300 килограмм çĕрулми, 20 килограмм сухан, 100 килограмм пăрçа тата 2 килограмм çу уйăрса апат-çимĕç фончĕ туса хучĕ.

Фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕçе колхозниксем те активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем 24 кубла метр вутă касса хатĕрлеме пулчĕç. Апат-çимĕç фондне 500 килограмм çĕрулми, 50 килограмм сухан, 50 килограмм кунăста хыврĕç.

Фронтовиксен çемьисем валли тумтир çĕлемелли бригада организациленĕ. Вăл бригадăра 6 çĕвĕ çĕлекен машина. Вăл çак кунсенчех ĕçе тытăнать.

Фронтовиксен çемьисене пулăшас енĕпе колхоз Кăршкари Винокуров ячĕпе тăракан колхоза ăмăртăва чĕнчĕ.

А. Хатаевский.

МТС çураки умĕн

(Елчĕк МТС-ĕн директорĕпе Яшин юлташпа калаçнинчен)

Иртнĕ ялхуçалăх çулне Елчĕк МТС-ĕ ăнăçлăн вĕçлерĕ. Трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапнине те пĕрле илсе шутласан, МТС 14,6 процент ирттерсе тултарчĕ, 6.857 тенкĕлĕх горючи перекетлесе хăварчĕ. Вăтам шутпа кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 484 гектар çĕрĕçĕ тунă, трактор ĕçĕн хăйне тăракан хакне 17,6 процент йӳнетнĕ.

Кăçал елчĕксем иртнĕ çул тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе татах та лайăхрах ĕçлеме хатĕрленеççĕ. Çĕнĕ çитĕнӳсем тума вĕсене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «МТС-сен тракторĕсене, комбайнĕсене тата ялхуçалăх машинисене 1943 çулти уйхир ĕçĕсене ĕçлеме хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени пулăшать.

Машинăсене тухăçлăрах ĕçлеттерес шутпа Елчĕк МТС-ĕн коллективĕ çуракине уйрăмах тĕплĕн хатĕрленчĕ. Тракторсене МТС планпа пăхнинчен икĕ уйăх маларах юсаса лартрĕ. Çавăн пекех культиваторсем, сеялкăсем, плугсемпе ĕçĕн ытти инвентарĕсене те пĕтĕмĕшпех юсаса çитернĕ. Тĕрĕсленĕ хыççăн тракторсене пурне те пысăк пахалăхпа юсани курăнчĕ.

Юлашки трактора мастерскойран юсаса кăларнă хыççăнах Елчĕк МТС-ĕн коллективĕ комбайнсене юсама пуçларĕ. Паянхи куна 14 комбайн моторне юсаса пĕтернĕ те ĕнтĕ. Çураки пуçланнă тĕле комбайн моторĕсене пурне те юсаса çитереççĕ. Комбайнерсем тракторсемпе ĕçлеме пушанаççĕ, çак вăхăтра вара мастерской трактор бригадисене техникăллă пулăшу парас ĕçе куçать.

МТС работникĕсем уйхир ĕçĕсен ăнăçлăхне кадрсем татса панине лайăх ăнланаççĕ. Çавăнпа вĕсем çĕнĕ кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе лайăх организацилерĕç. МТС кăçал курсран 132 тракторист вĕрентсе кăларчĕ. Трактористсен курсĕнчен учетчик-заправщиксем те вĕренсе тухрĕç. Кирлĕ пулсан вĕсем трактористсен вырăнне йышăнма пултараççĕ.

Халĕ МТС трактор бригадисене комплектласа çитерчĕ. Çамрăк тракторситсемпе ултшăнса ĕçлеме опытлă, пĕр çултан кая мар ĕçленĕ трактористсене уйăрса лартнă. Вĕсем «машинăсен хуçисем»—старши трактористсем пулаççĕ.

Кăçал çуракинче тракторсене тата кăкарса ĕçлемелли машинăсене туллин ĕçлеттерес тĕлĕшпе пур мерăсене те йышăнма тăрăшаççĕ.

—Лайăхрах ĕçлемелли майсемпе эпир иртнĕ çул туллин усă курайман марăмăр,—тет МТС директорĕ Яшин юлташ.— Машинно-тракторнăй паркăн ĕç тухăçлăхне ӳстермелли резервсем пирĕн татах та пур.

Станцин иртнĕ çулти производствăллă ĕçне пăхса тухнă хыççăн пирĕн, тĕслĕхрен, çакă курăнчĕ. Пур бригадăсем те тикĕс ĕçлесе, задание тултарчĕç е ирттерсе тултарчĕç пулсан та, ĕç планне вĕçне çити тултарман трактористсем те пулчĕç. Çакă вăл йăлтах çамрăк трактористсене ĕçре техникăллă пулăшу çителĕклĕ паманнинчен килчĕ. Тракторпа ĕçлеме ларнă çĕнĕ çын çуракин малтанхи кунĕсенче вĕренсе кăна пырать-ха. Машина ĕçре пăсăлсанах вăл мĕншĕн пăсăлнине часах тавçăрса илеймест. Пĕчĕк калтăкшăнах трактор тăрать вара. Кунпа пĕрле тата машинăсене техника енчен пăхас правилăсене пăсни те пулнă. Çаксене пула иртнĕ çулти сезонра пирĕн машинăсем чарăнкаласа та тăчĕç.

Çакăн пек йăнăшсене тăвасран кăçал МТС малтанах сыхланать. Çуракин малтанхи кунĕсенчен пуçласах трактор бригадисене техника енчен пулăшу парса тăма уя походнăй мастерскойсем тухаççĕ. Механиксене тракторсем ĕçлекен кустсем çумне уйăрса çирĕплетнĕ. Кашни механик 16 трактор ĕçне сăнаса тăрать, кирлĕ пулсан техникăллă пулăшу парать. Куçса çӳрекен мастерскойсем тăваттă пулаççĕ: вĕсенчен пĕри автомашина çинче, виççĕшĕ—урапасем çинче пулаççĕ. Вĕсем çине верстаксем, тискисем çирĕплетсе лартаççĕ, инструментсем тата машинăсене чăках кирлĕ пулакан запаслă пайсем çителĕклĕ пулаççĕ. Походнăй мастерскойсен пĕтĕм ĕçне МТС мастерскойĕн начальникĕ Каринкин юлташ хăй ертсе пырать.

Машинăсемпе тракторсен паркĕн ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе каçхи сменăсен ĕçне тĕрĕс организацилени пысăк вырăн йышăнать. Халиччен çĕрле ĕçлесси çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхман. Бригадирсем çĕрле бригадăсене сахал тухса курнă, трактористсене ĕçлеме сахал пулăшнă. Кăçал çĕрле ĕçлессине пысăк вырăна хумалла. Тракторсем кăнтăрла та, çĕрле те тикĕс ĕçлессишĕн старши трактористсем ответлă пулаççĕ. МТС руководителĕсем çураки вăхăтĕнче тракторсен çĕрлехи ĕçне куллен сăнаса тăрассине хăйсем çине илеççĕ.

МТС кăçал çуракинче агрегатсемпе тата анлăрах усă курать. Сухаласипе сӳрелессине пĕр вăхăтра туса пынисĕр пуçне, çĕртме сухи тунă çĕрте культиваципе пĕр вăхăтрах акса пыраççĕ. Трактор пĕр вăхăтрах культиватор, сеялка тата лаша сеялки кăкарса ĕçлет. Çавăн пекех тракторсем çумне, хăйсен плугĕсемпе сӳрисемсĕр пуçне, лаша плугĕ, сӳри кăкарса ĕçлеççĕ. Çакă вăл ĕçĕн хăвартлăхне ӳстерме тата горючи перекетлеме пулăшмалла.

Иртнĕ çул МТС хăйне панă горючие чылай перекетлесе хăварчĕ. Кăçал МТС коллективĕ горючие татах та ытларах перекетлесе хăварма ĕмĕтленет. Горючи перекетлемелли мероприятисене халех йышăннă. Бригадăсенче витресене, пичкесене, горючи ямалли насоссемпе варинкесене юсаса йĕркеленĕ. Бригадăсем ĕçлемелли вырăнсенче горючи тытса усрамалли вырăнсем тăваççĕ.

Елчĕк МТС коллективĕ кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче тракторсен паркĕн ĕç тухăçлăхне татах та ӳстерет. Социализмлă ăмăртура малти вырăна тухнине çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе çирĕплетме хатĕрленет.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

9. Гастелло ĕçĕ

Вăл аслă кун пулчĕ. Вăл кун ирхине
Çĕршывăм итлерĕ çулпуç сăмахне.

Çулпуçăмăр чĕнчĕ:—Туссем, тăвансем,
Вăрçа тухăр пурте карах çĕкленсе.

Пире сĕмсĕр нимĕç тăвасшăн чура, —
Аркатăр ăна юнлă çапăçура.

Пире хавшатаймĕ нимле йывăр çул,
Эпир—ирĕк халăх чура пулас çук.

Çакна пĕтĕм халăх итлерĕ тăрса.
Çав ир тухса кайрĕ Гастелло вăрçа.

Кĕрлет ик моторлă хăватлă хăлат,
Гастелло çул тытрĕ фронт урлă тыла.

Çĕршывшăн, çулпуçшăн сыхла тивĕçе,
Пĕр шелсĕр вĕлер эс тискер нимĕçе.

Фашист вăр-хурах пек килет çаратма,
Асса иртĕхмешкĕн ăна парас мар.

Эпир тунă пурнăç, ĕçленĕ хĕрсе,
Эпир тунă аслă цехсем, корпуссем.

Авал пуш-хир тăрăх çил чупнă çĕрте
Эпир тунă çутă телейлĕх çуртне.

Тин çеç çунат сарнă хăюллă этем
Пăхса çитĕнтерчĕ таса ĕмĕтсем.

Эпир никама та тивме шутламан,
Анчах килсе çапрĕ ултавлă тăшман.

Паян çавăнпа та Гастелло хаяр;
Пĕр шухăш кăна ун: çапар, аркатар!

Çапар, аркатар вăр-хурах тăшмана,
Тискер нимĕçе пултăр вилĕм кăна.

Ак бомбардировщик колонна курать,
Тăшманăн обозĕ таçтан тăсăлать.

Гастелло васкавлăн унта çул тытать,
Анчах ăна нимĕç часах асăрхать.

Тăшман асăрхать те пеме тытăнать,
Сехри хăпнă нимĕç перет хыттăнах.

Гастелло та хирĕç вутпа вăтăрать.
Анчах, чим, мĕн пулчĕ хăрах мотора?

Тăшманăн снарячĕ лекрĕ тӳрех.
Машина кисренчĕ... çулăм кĕрлет.

Нумай шутламашкăн халь вăхăт та çук
Калла таврăнмашкăн ытла вăрăм çул.

Сикес парашютпа — вара халь тинех
Пит çăмăл лекетĕн тăшман аллине.

Çук, паттăр Гастелло хăравçă сын мар,
Çĕршывшăн вăл хатĕр вутра та çунма.

— Çапах та, вăй-халăм, часах эс ан чак!
Вилсен те, çунсан та çĕршывшăн анчах.

Çапла шухăшларĕ Гастелло-герой.
Ун шухăшне илтрĕ вăрман та хир-уй.

Ĕçне унне курчĕ çĕршывăмçăм ман.
Вутне унне лайăх тутанчĕ тăшман.

Çапах та, вăй-халăм, часах эс ан чак!
Вилсен те, çунсан та пĕр тупсăм анчах.

Çак шухăш çĕклерĕ герой чĕрине.
Гастелло çул тытрĕ колонна çине.

Пуçлать вăл колоннăн кайри вĕçĕнчен.
Вут-çулăм хӳрийĕ шăвать хысĕнчен.

Машина-комета шăвать те шăвать,
Вут хыпнă бензин баксенчен сапăнать.

Вăраннă хаярлăх, вут-çулăм хӳри
Тăшманшăн — хăрушă, тăшманшăн — вĕри.

Гастелло пĕр шелсĕр шăвать те шăвать,
Ун хыççăн хăватлă вут йĕрĕ юлать.

Пур автоцистерна, бензин пичкисем
Сиксе сирпĕнеççĕ герой пынăçем.

Шартах шартлатаççĕ снаряд-бомбăсем,
Машина-комета вут-хĕм тăкнăçем.

Çĕршывшăн, çулпуçшăн сыхла тивĕçе;
Пĕр-шелсĕр вĕлер эс, пĕтер нимĕçе.

Вĕçленчĕ колонна, малта ав танксем.
Машина-комета. унта эс çитсем!

Мĕнле вăй-хăват халь чарайтăр ăна!
Гастелло çитет те унта тăрăнать.

Танксем сирпĕнеççĕ, çурлаç снарядсем.
Вутра вĕтĕнеççĕ çĕршер фашистсем.

Герой аçа-çиçĕм пек çĕр çĕмĕрет.
Гастелло-комета кĕрет ĕмĕре.

Кунсем çиçсе иртĕçĕ, иртĕ пин çул,
Гастелло чĕри нихăçан сӳнес çук!

Малалли. Поэма 61-мĕш номертен пичетлеме пуçланă.

(Малалли пулать).

Ют çĕршывсенче

Тунисри вăрçă ĕçĕсем

АНГЛИН 8-МĔШ ÇАРĔ ГАБЕСА ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 29-мĕшĕнче Англин саккăрмĕш çарĕ малалла куçса пырса Эль-Хамма тата Габеса йышăнса илнĕ. Мартăн 20-мĕшĕнчен вара 8.000 çынна тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС) Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англин 8-мĕш армийĕ, çурçĕрелле куçса пырса, ĕнер ирхине Метуйа тата Удреф пункчĕсене йышăннă. Тăшман васкаса хатĕрленĕ оборона позицийĕсем çинче çирĕпленсе тăрасшăн. Гафсы секторĕнче союзниксен войскисем, минăсем лартса тухнă вырăнсенчен иртсе, малалла куçса пынă, çурçĕрте Седженанене йышăннă.

Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, халĕ Уссельти тата Файда районĕсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Нимĕç войскисем Сфакс еннелле чакса пыраççĕ.

Габесран çурçĕрелле тинĕс хĕррипе чакса пыракан нимĕç колоннисем çине Англин тинĕс-çар флочĕ пĕрмаях персе тăрать.

Америка войскисем 8-мĕш арминчен уйăрса тăракан района тăшмантан тасатас тесе ĕнер Эль-Геттартан малалла куçса пынă.

ЛОНДОН, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер самолетсенчен персе Удерфа — Сфакс çулĕ çинче тăшманăн 50 мотоповозкинчен кая мар пĕтерсе тăкнă, 300 мотоповозкине сиенленĕ. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 20 самолетне персе ӳкернĕ.

Рейтер агентстви нимĕçсем çурçĕрелле хăвăрт чакса пыраççĕ, тесе пĕлтерет. Роммелĕн тĕп задачи халь — çурçĕрти Арнива войскисемпе пĕрлешесси пулать. Ромель Бизерта — Тунис линийĕ çинче çирĕпленсе тăма шутлать пулĕ, теççĕ.

Марет позицийĕсем çинче Роммель аллинче нимĕçсен икĕ танковăй дивизи, пĕр бронетанковăй çăмăл дивизи тата итальянецсен темиçе дивизийĕ пулнă. Çапăçура нимĕçсене вăйлăн пырса çапнипе вĕсен çухатăвĕсем çынсем тĕлĕшпе те, материалнăй часть тĕлĕшпе те пысăк пулмалла.

СЫВЛĂШРИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем нимĕçсен Сен-Назерти подводнăй лодкăсен базиçине вĕçсе пырса вăйлăн тапăннă.

АНГЛИПЕ АМЕРИКА СЫВЛĂШРАН ПЫРСА ТАПĂННИСЕМ ГЕРМАНИ ХАЛĂХĔН КĂМĂЛНЕ ХУÇАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «Дас Шварце кор» ятлă гитлерла хаçат Германи çине вĕçсе пырса тапăннисен пĕлтерĕшне пĕчĕклетсе кăтартма хăтланни ахалех пулнă пулĕччĕ, тет. Мĕншĕн тесен «Рейн çинчи, Рур облаçĕнчи хуласенче, Бременра, Любекра, Ростокра, Мюнхенра, Нюренбергра т. ыт. хуласенче те нумай нимĕçсем пурăнаççĕ, вĕсене ултала ма çук. Вĕсенчен пиншер çын вилнĕ, пиншер çын сывлăхĕсене çухатнă, вуншар пин çын хăйсен пурлăхне çухатнă. Хаçат каланă тăрăх, Англи сывлăшран пыра-пыра тапăнни халăх кăмăлне хуçать.

АМЕРИКĂРИ «ЛАЙФ» ЖУРНАЛĂН СССР ÇИНЧЕН ЯТАРЛАСА ÇЫРНĂ НОМЕРĔ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). США-ра питĕ сарăлнă «Лайф» журналăн издательстви ятарласа Совет Союзĕ çинчен çырнă номерне пичетлесе кăларнă. Журналта мĕнпурĕ 116 страница. Унăн обложки çинче — Сталин юлташăн портречĕ.

Журнал историйĕнче уйрăм çĕршыв çинчен ятарласа уйрăм номер кăларни пирвайхи хут пулнине ăнлантарса, редакци çапла çырать: редакци хăйĕн «ăшă, туслă, паттăр вырăс халăхне хисеплесе тăнине тата Америкăри вулакансене Совет Союзĕн çитĕнĕвĕсемпе лайăхрах паллаштарас тесе тăрăшнине» палăртасшăн, тет. Журнал çакна асăрхаттарать: «Çакăн пек кĕске вăхăтра урăх ниепле çĕршыв та çав тери пысăк результатсем тума пултарайман», тет.

Журналра Совет Союзĕнчи промышленность, наука, культура, литература тата искусство çитĕнĕвĕсем çинчен тĕрлĕ материалсем пичетленĕ. Совет Союзĕнчи ертсе пыракан деятельсен биографийĕсем журналра пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Хĕрлĕ Çар фашистла ордасемпе паттăррăн кĕрешни çинчен темиçе статья пичетленĕ. Жунал издательсем каланă тăрăх, унăн тиражĕ 3.000 экземплярa çитет.

ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ ХЭЛЛ ТУХСА КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Черчилль пĕрлешнĕ нацисем Германие аркатнă хыççăн Японие аркатса тăкаччен хăйсен хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕр пайне демобилизацилеме пултарĕç, тесе каланă пулнă. Çавăн пирки панă ыйту çине ответлесе, Хэлл пресс-конференцире çапла каланă: Пĕрлешӳллĕ Штатсем тĕнĕл держависен хĕçпăшаллă вăйĕсене Хĕвеланăçĕнче те, Инçетри Хĕвелтухăçĕнче те пĕр пекех аркатса тăкасшăн тăрăшаççĕ, тенĕ. Çак ыйтăва Хэлл урăх тĕпчесшĕн пулман.

Корреспондентсенчен пĕри Хэллран çапла ыйтнă: державăсене икĕ пая: тĕп державăсем тата иккĕмĕш вырăнта тăракан державăсем çине Черчилль пек уйăрма Атлантика хартийĕ хушать-и? тенĕ. Хэлл каланă: ку ыйтупа эпĕ тавлашăва хутшăнмастăп, тенĕ, вăл тавлашăва хăшпĕр ырă кăмăллă ăслă çынсем хирĕçӳсем тесе хаклама пултарĕç, тенĕ. Хэлл сăмахĕ тăрăх, вăл ыйтăва чи малтан тӳрремĕнех интересленекенсем хăйсем татса памалла. Атлантика хартийĕ пирки тата вăл харти çине США епле пăхнă пирки малтан каланисем çумне хушмалли манăн урăх нимĕн те çук, тенĕ Хэлл.

Корреспондент малалла Хэллран тӳрремĕнех интересленекен çĕршывсем вăл ыйтăва чи малтан хăйсем татса памалла тенине епле ăнланмалла, тесе ыйтнă. Çакăн çине Хэлл çапла ответ панă: тӳрремĕнех интересленекен çĕршывсем кирек епле пулсан та ĕнтĕ вăл ыйтăва чи малтан сӳтсе-явма пултараççĕ. Халĕ çак тĕлĕшпе мĕн те пулин тăваççĕ-ши? тесе ыйтнине хирĕç Хэлл çапла ответленĕ: ку ыйтупа манăн ниепле сведенисем те çук, тенĕ. Сӳтсе-явассин пĕр-пĕр тапхăрĕ пирки эпĕ нимĕн те каласшăн мар, тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

„Главкинопрокатăн" чăваш контори

СТАЛИНГРАД

ятлă документальнăй çĕнĕ фильм илнĕ, ăна сывăх вăхăтрах кăтартма пуçлать.

Фильм планне Л. Варламов тата А. Кузнецов хатĕрленĕ.

Текст—В. Гроссманăн.

Режиссер — Сталинла премиı лауреачĕ Л. Варламов.

Ӳкерессине Сталинградпа Дон фрончĕсенчи кинохроника группин кинорепортерĕсем ӳкернĕ.

Кинохроникăн Центральнăй студийĕ 1943 çулта кăларнă.

Чебторгăн атă-пушмак мастерскойĕн пӳлĕмне урăх организацие панă пирки, атă-пушмак юсама панă çынсен хăйсен квитанцийĕсене 1943 çулхи апрелĕн 5-мĕшĕччен илсе пырса çĕнĕрен регистраци тумалла.

ЧЕБТОРГ.

Вăрман ĕçĕпе вăрман юхтарас ĕçре ĕçлекенсен Союзĕн Чăваш обкомне ялан ĕçлеме бухгалтер кирлĕ. Ĕçукçи уйăхне 700 тенкĕ. Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, М. Горький урамĕ, 23. Телефон 4—58.

Заготзерно Чăваш конторине старши бухгалтер кирлĕ. Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Байдуков урамĕ, 11.

Çул тăвакан уйрăм машинăсемпе ĕçлеме тата трактористсен курсне вĕренме илеççĕ, веренессе пĕр уйăх таран вĕренмелле.

16 çултан кая мар çитĕннисене тата 4 çултан кая мар вĕреннисене илеççĕ. Вĕренекенсене уйăхне 550 тенкĕ стипенди, общежити параççĕ тата столовăй пулать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Калинин урамĕ, 51, кадрсен пайĕ. 9 сехетрен пуçласа 18 сехетчен пĕлме пулать. Çавăнтах тата старши экономист, главнăй бухгалтерсем тата бухгалтер-ревизорсем кирлĕ.

3—1

Çĕвĕç мастерскойĕнче ĕçлеме çĕвĕçсем, ата çĕлекенсем кирлĕ. Условисем çинчен кадрсен пайĕнче çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Калинин урамĕ, 51.

Вăрнарти зооветтехникум çумĕнчи ветеринари фельдшерĕсен çулталăклăх курсне вĕренме илеççĕ.

16 çула çитнĕ унтан иртнĕ арçынсемпе хĕрарăмсенĕ, 7 çултан кая мар вĕреннĕскерсене илеççĕ.

Вĕренекенсене уйăхне 150 тенкĕ стипенди параççĕ тата кăнтăрлахипе каçхи апат тума столовăй пулать.

Кĕрес текенсем райçĕрĕç пайĕсенчен командировкăсем илсе Вăрнар районĕнчи Булатово ялне пымалла.

Завхоз васкавлă кирлĕ. Условисем килĕшнĕ тăрăх. Центроэлектромонтажăн 6-мĕш номерлĕ проектно монтажнăй уйрăм участокĕнчен ыйтмалла: Ленин урамĕ. 11.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 321

Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.